27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 АВГУСТ 23 ЮНКУН 166(6661) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, наступлени тума тытăнса, артиллерипе авиаци вăйлăн персе пулăшнипе, противникăн ЯССЫ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри темиçе ретрен тăракан вăйлă оборонине татса кĕнĕ те, виçĕ кун хушши наступлени туса çапăçса, 60 километр таран малалла кайнă, татса кĕнĕ вырăна фронт тăршшĕпе 120 километр таран сарнă.

Наступлени тунă вăхăтра фронт çарĕсем противник оборонин хăватлăн тĕреклетнĕ пункчĕсене — ЯССЫ, ТЫРГУ-ФРУМОС, УНГЕНЬ хулисене — штурмласа туртса илнĕ тата, малалла çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта йышăннă.

Противникăн оборонине татса кĕнĕ чухнехи тата ЯССЫ, ТЫРГУ-ФРУМОС, УНГЕНЬ хулисене илессишĕн пынă çапăçусенче ТРОФИМЕНКО генерал-лейтенантăн, КОРОТЕЕВ генерал-лейтенантăн, ШУМИЛОВ генерал-полковникăн, ГАЛАНИН генерал-лейтенантăн, ПЕТРУШЕВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ГОРЯЧЕВ генерал-лейтенантăн, ФОМЕНКО генерал-майорăн, МАРТИРОСЯН генерал-майорăн, САФИУЛИН генерал-майорăн, ЛАТЫШЕВ генерал-майорăн, РУМЯНЦЕВ генерал-майорăн, КИНДЮХИН генерал-майорăн, ДЖАУХА генерал-майорăн, СМИРНОВ генерал-майорăн, КОНЕВ полковникăн, ХОХЛОВ полковникăн, АБРАМОВ полковникăн, МОШЛЯК полковникăн, ПЕРЕПЕЛИЦА полковникăн, ПУТЕЙКО полковникăн, РУБАН полковникăн, СОКОЛОВ генерал-майорăн, СМИРНОВ генерал-майорăн, ЛЕЛЕНКОВ генерал-майорăн, МОРОЗОВ генерал-майорăн, ВАСИЛЕВСКИЙ полковникăн, ФЕДОРОВСКИЙ генерал-майорăн, ФРОЛОВ полковникăн, ХИЛЬЧЕВСКИЙ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ФОМИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ФАУСТОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ЛЕБЕДЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн ЦИКАЛĂН, артиллери генерал-майорĕн ПЕТРОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПОПОВИЧĂН, артиллери генерал-майорĕн ГУСАРОВĂН, ИВАНОВ полковникăн, ГУЩИН полковникăн, САПОЖНИКОВ полковникăн, ВЛАСЕНКО подполковникăн, ЭРИСТОВ полковникăн, ШМАНОВ полковникăн, ПАСТУХ полковникăн, МОТОВ полковникăн, МАКАРОВ полковникăн, ШЕЙНИН подполковникăн, ЗАПОРОЩУН полковникăн, ЕРЕМЕНКО полковникăн, САВЧЕНКО подполковникăн, ДЕНИСЕНКОВ подполковникăн, КОЗАК подполковникăн, ТРОНЕВ подполковникăн, БРЕЕВ подполковникăн, БЕЛИЧЕНКО подполковникăн, ОРЛОВ полковникăн, ЧУМАК полковникăн, КОЛОМИЙЦЕВ майорăн, БОГУШЕВИЧ подполковникăн, МАЛОВ полковникăн, ПУРИН подполковникăн артиллерисчĕсем; танкăвăй çарсен генерал-полковникĕн КУРКИНĂН, танкăвăй çарсен генерал-майорĕн АХМАНОВĂН, ЛЫСКИН полковникăн, ИВЛЕВ подполковникăн, ОСТАПЕНКО полковникăн, ОБДАЛЕНКОВ полковникăн, АТОНОВ подполковникăн, ТИТАРЕНКО подполковникăн, КРАВЧЕНКО майорăн, РОМАНЕНКО майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ГОРЮНОВĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн СТЕПИЧЕВĂН, авиаци генерал-майорĕн ПОДГОРНЫЙĂН, авиаци генерал-майорĕн ВИТРУКĂН, ЧАМПАЛОВ полковникăн, ЮДАКОВ полковникăн, ТАРАНЕНКО полковникăн, РОМАНОВ подполковникăн, БЕРМАН подполковникăн, ЧИЖИКОВ полковникăн, ШУТЕЕВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЦИРЛИНĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ПЛЯСКИНĂН, МАЛОВ полковникăн, ПОНИМАШ полковникăн, ГЛЕЙЗЕР полковникăн, КОВАЛЕНКО полковникăн, МЯСНИКОВ полковникăн, ПЕНЗИН полковникăн, ПАВЛЕНКО подполковникăн, ЧЕРНЫХ инженер-полковникăн, МИРОНЦЕВ подполковникăн, СОЛОВЬЕВ майорăн, СУНДСТРЕМ майорăн, САВИЦКИЙ инженер-майорăн, ДЮКОВ инженер-капитанăн, СМИРНОВ майорăн, УВЯТКИН майорăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ЛЕОНОВĂН, АГАФОНОВ полковникăн, БОРИСЕНКО полковникăн, ДОЛЕНКО подполковникăн, ШИШИЛОВ майорăн, ЕПИФАНОВ майорăн, СЫВОРОТКИН подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, противник оборонине татса кĕнĕ чухнехи тата ЯССЫ хулине туртса илнĕ чухнехи çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «ЯССКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, августăн 22-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ инçĕр çирĕм тăвату тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, противник оборонине татса кĕнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, противник оборонине татса кĕнĕ чухнехи тата ЯССЫ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи августăн 22-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ТОЛБУХИНА

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, наступлени тума тытăнса, артиллерипе авиаци вăйлăн персе пулăшнипе, противникăн БЕНДЕРЫ хулинчен кăнтăртараххри вăйлăн тĕреклетнĕ тата темиçе ретрен тăракан оборонине татса кĕнĕ те, виçĕ кун хушши наступлени туса çапăçса, 70 километр таран малалла кайнă тата татса кĕнĕ вырăна фронт тăршшĕпе 130 километр таран сарнă, халăх пурăнакан 150 пункта ытла ирĕке кăларнă, вăл шутра КАУШАНЫ, ЧИМИШЛИЯ, ЛЕЙПЦИГ, ТАРУТИНО ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсем пур.

Противник оборонине татса кĕнĕ чухнехи çапăçусенче ШАРОХИН генерал-лейтенантăн, ШЛЕМИН генерал-лейтенантăн, ГАГЕН генерал-лейтенантăн, КУПРИЯНОВ генерал-майорăн, КОТОВ генерал-майорăн, ЛОЗАНОВИЧ генерал-майорăн, ГОЛОСКО генерал-майорăн, ДРЕЙЕР генерал-майорăн, ПЕТРУШИН полковникăн, БАХТИН генерал-лейтенантăн, БОБРУК генерал-майорăн, КОЛЧУК генерал-майорăн, КОСОБУЦКИЙ генерал-майорăн, ПАРФЕНОВ полковникăн, МАКСИМОВИЧ полковникăн, КАРАМЫШЕВ генерал-майорăн, ДУНАЕВ полковникăн, КУЗНЕЦОВ полковникăн, НИКИТИН полковникăн, СМИРНОВ полковникăн, ВЛАСОВ полковникăн, ШКОДУНОВИЧ генерал-майорăн, КРУЗЕ генерал-майорăн, МУХАМЕДЬЯРОВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн НЕДЕЛИНĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ВОЗНЮКĂН, ЧИСТЯКОВ полковникăн, артиллери генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕНКĂН, артиллери генерал-майорĕн БРЕЙДĂН, артиллери генерал-майорĕн РАТОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПАВЛОВĂН, УСИК полковникăн, МАРЕННОВ полковникăн, СЛЕПАКОВ полковникăн, ТРЕХНЕВ полковникăн артиллерисчĕсем; танкăвăй çарсен генерал-лейтенанчĕн СУХОРУЧКИНĂН, танкăвăй çарсен генерал-майорĕн ЖДАНОВĂН, танкăвăй çарсен генерал-майорĕн КАТКОВĂН, СТРЕЛЕНКО подполковникăн, ШНАДОВ подполковникăн, ВЕТРОВ подполковникăн, КАРТАШОВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн СУДЕЦĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТОЛСТИКОВĂН, ИВАНОВ полковникăн, ШАТИЛИН подполковникăн, СМИРНОВ полковникăн, ЛОЖЕЧНИКОВ полковникăн, КУДРЯШОВ полковникăн, авиаци генерал-майорĕн БЕЛЕЦКИЙĔН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ЕРМАЧЕНКОВĂН, МАЛОВ подполковникăн, СТЕПАНОВ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн КОТЛЯРĂН, ПАВЛОВ полковникăн, ЗАГРЕБИН полковникăн, НОМИНАС полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВĂН связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, противник оборонине татса кĕнĕ чухнехи çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене «НИЖНЕДНЕСТРОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, августăн 22-мĕшĕнче, 23 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, инçĕр çирĕм тăвату тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, противник оборонине татса кĕнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, противник оборонине татса кĕнĕ чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи августăн 22-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Геройне гварди полковникне Александр Иванович Покрышкина виççĕмĕш хут „Ылттăн Çăлтăр" медальпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командовани панă боевой заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата Совет Союз Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ геройла ĕçсем тунăшăн Совет Союзĕн Геройне — гварди полковникне Александр Иванович Покрышкина виççĕмĕш хут «Ылттăн Çăлтăр» медаль парса наградăлас, унăн геройла ĕçĕсене ĕмĕр асра тытмалла пултăр тесе, унăн кĕлеткине бронзăран туса тата çав кĕлетке çине кирлĕ пек çырса хурса, ăна Мускавра Советсен Дворецĕнче колонна евĕрлĕ постамент çине лартас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи августăн 19-мĕшĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Авиацин Главнăй Маршалне А. А. Новикова 1-мĕш степень Суворов орденĕпе наградăласси çинчен

Çапăçу ĕçĕсене лайăх пĕлсе тата хăюллă ертсе пынăшăн тата çав ĕçсене ăнăçлă туса ирттерме Командовани панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн, çавна пула вара фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çитĕнӳсем пулса пынăшăн, Авиацин Главнăй Маршалне Александр Александрович Новикова 1-мĕш степень Суворов орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи августăн 19-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем ТАРТУ хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăртарахра, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ВЫБСТЕ, КАМБЬЯ, ЭННУ, ЛУТИКА, НЭРУТИ, ТАММЕ ятлă пысăк ялсем.

РИГА хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, ГОСТИНА хулине тытса илнĕ тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă.

ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Командовани панă приказ тăрăх, пирĕн çарсем ТУКУМС хулине хăварнă, лайăхрах позицисем çине чакнă.

ШАУЛЯЙ (ШАВЛИ) хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

ПРАГĂРАН çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сирсе янă, вара, контратакăсем туса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ПРОСТЫНЬ, ЗЕЛЕНЕЦ, ЛОСЕВИЦЕ, ЯСЕРУВКА, ЛЕТНЕ УРЛЕ, ЯДУВ, ЗАЗДРОСЬЦЬ, ТРОЯНЫ, ТЛУЩ ятлă пысăк ялсем тата ЛОХУВ, УРЛЕ, ШЕВНИЦА, ТЛУЩ ятлă чугун çул станцийĕсем.

САНДОМИР хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем ВИСЛА шывĕн сулахай хĕрриниче плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. САНДОМИР хулинчен çурçĕртерехре çавăрса илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкнă чухне пирĕн çарсем тăшмана çынсемпе техник тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухату кӳнĕ: ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—88, бронетранспортерсем—18, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—142, миномётсем—100 ытла, автомашинăсем—100 ытла, тягачсем—35. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 12.000 вилли таран выртса юлнă. Çав çапăçура пирĕн çарсем çакăн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНĔ: танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—20, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—72, минометсем—83, пулеметсем—120, винтовкăсемпе автоматсем—5.000. Нимĕçсен 1.550 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Августăн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 206 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 88 самолетне персе ӳкернĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕМ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТМЕЛЛИ ТАТА ЫРАШ АКМАЛЛИ ПЛАНСЕНЕ 1944 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Кĕрхи тата çурхи тырă-сем вырнă	Капана хывнă	Çапнă	Кĕрхи тырă-сем акнă
Чурачăк	71,3	30,6	21,4	67,4
Калинино	68,0	22,2	15,4	50,0
Красноармейски	67,5	19,7	18,1	68,0
Шăхасан	67,1	14,2	10,8	51,0
Çĕрпӳ	66,9	37,3	21,8	54,1
Канаш	64,0	18,1	14,9	45,8
Чкаловски	63,0	21,5	15,9	32,2
Шупашкар	62,6	24,6	18,0	48,0
Етĕрне	61,9	29,0	15,2	40,0
Элĕк	61,0	13,9	9,7	41,6
Муркаш	59,1	29,5	24,0	56,3
Сĕнтĕрвăрри	58,9	24,7	17,2	42,6
Вăрмар	58,6	25,5	18,9	52,1
Елчĕк	58,6	18,4	11,5	50,6
Сĕнтĕр	58,0	27,5	22,4	48,0
Куславкка	57,2	21,7	14,5	32,7
Ишлей	56,9	21,9	14,9	41,1
Октябрьски	56,6	21,6	16,0	40,5
Шăмăршă	56,0	31,3	18,7	30,4
Комсомольски	55,9	30,0	14,8	29,2
Вăрнар	54,7	24,7	22,2	58,9
Хĕрлĕ Чутай	54,6	28,2	21,2	32,6
Йĕпреç	53,5	28,2	21,1	29,3
Пăрачкав	52,6	39,5	18,6	19,6
Тăвай	51,2	18,8	12,8	33,8
Советски	49,7	21,4	10,4	36,6
Çĕмĕрле	47,7	38,6	17,3	24,0
Первомайски	47,3	16,3	14,9	30,0
Улатăр	39,3	24,3	16,5	11,4
Кувакино	38,5	26,5	15,5	20,5
Шупашкар хули	51,7	38,9	17,5	18,7
Пĕтĕмпе	57,9	24,0	16,7	41,2
Августăн 15-мĕшĕ тĕлне пулнă	47,2	17,2	11,4	15,4

Вăрлăхлăх курăксене тата выртнă тырăсене лайăх вырса пухнăшăн комбайнерсене ĕçшĕн хушса тӳлессĕ

МУСКАВ. СССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, вăрлăхлăх курăксене лайăх вырса пухнăшăн комбайнерсем, ĕçшĕн МТС-сенчен илнисĕр пуçне, хăйсем ĕçлекен колхозсенчен те тĕштырă хушса илме пултараççĕ.

Колхозсем кашни курăка вырса пухмалли кулленхи нормăран ирттерсе çапса тасатнă кашни центнер курăк вăррищĕн комбайнера 1,4 килограмран пуçласа 6 килограма çити тĕштырă хушса тӳлеме пултараççĕ. Мĕн чухлĕ хушса тӳлесси çавăн пекех тата 15 е 20 футлă комбайнпа вырса пухниччен те килет.

МТС директорĕсене выртнă тырра вырса пухнă комбайнерсене, трактористсене тата комбайнер помощникĕсене ĕçшĕн 40 процента çити ӳстерсе тӳлеме ирĕк панă.

(ТАСС).

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕН ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ТĔЛĔШПЕ ПЫРАКАН АМАРТĂВĔ

(1944 çулхи августăн 20-мĕшĕ тĕлне илнĕ сведенисем тăрăх)

Районсем	Миçемĕш вырăн йышăнать
Канаш	1
Шăхасан	2
Куславкка	3
Çĕрпӳ	4
Шупашкар	5
Чурачăк	6
Ишлей	7
Вăрмар	8
Октябрьски	9
Красноармейски	10
Калинино	11
Сĕнтĕрвăрри	12
Тăвай	13
Сĕнтĕр	14
Муркаш	15
Етĕрне	16
Çĕмĕрле	17
Елчĕк	18
Вăрнар	19
Йĕпреç	20
Хĕрлĕ Чутай	21
Первомайски	22
Элĕк	23
Улатăр	24
Комсомольски	25
Чкаловски	26
Советски	27
Кувакино	28
Пăрачкав	29
Шăмăршă	30

Комбайнер А. Иванов юлташ 130 гектар вырса пухнă

ЙĔПРЕÇ, августăн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбайнпа тырă вырса пухас ĕçĕн мастерĕ Александр Иванович Иванов юлташ ултă кун хушшинче пĕр комбайнпа 130 гектар тырă вырса пухнă. Çак вăхăтра вăл 300 килограмм горючи перекетленĕ.

Çĕрпӳ МТС-ĕнчи Громов комбайнерпа ăмăртăва тухнă П. Маркиянов комбайнер 4 кун хушшинче 80 гектар вырса пухнă. МТС-ри А. Сергеев комбайнер 65 гектар, Ф. Семенов — 76 гектар пухнă.

МТС, мĕнпур комбайнсемпе 726 гектар пухса, плана 52 процент тултарнă. Комбайнсемпе тырă вырса пухас ĕç ăнăçлă пырать.

Кĕрхи тырăсене акса пĕтереççĕ

СЕНТЕР. (Телефонпа). Калайкасси ялсоветĕнчи колхозсем кĕрхи тырăсене çурри ытла акрĕç. Чылай колхозсенче машинăсемпе ĕçлеççĕ.

«Финанс» колхоз иртнĕ çулта ир акнă участоксем çинче 100 пăтран кая мар ыраш туса илнĕ. Кăçал та вĕсем кĕрхи тырăсене ир акма тытăнчĕç.

«Ударник», «Безбожник», «Красная Чувашия» колхозсем те ака ĕçне вĕçлеççĕ.

П. ИСАЕВ.

Тырпул пухса кĕртес ĕçĕн татăклă кунĕсем

Тырпул пухса кĕртес ĕçĕн малтанхи эрнисемех çакна кăтартса пачĕç: уйхирте пăхса çитĕнтернине пурне те кĕске срок-сенче тата тĕплĕн пухса кĕртме пирĕн ялхуçалăхĕн пур майсем те пур. Анчах çавна пурнăçа кĕртес тесен, питех те нумай вăй хуни, кашни колхозăн, кашни совхозăн, кашни МТС-ăн хăйĕн ĕçне пĕлсе те кал-каллăнрах организацилени кирлĕ. Çавна пурнăçа кĕртес тесен, тырпул пухса кĕртес ĕçри çитменлĕхсене, тырпулăн хăшпĕр пайне пысăк хăрушлăх кӳрекен çитменлĕхсене, хăвăртрах пĕтермелле.

Мĕнле çитменлĕхсем-ха вĕсем?

Пуриччен малтан сăмах кунта тырпул çулас ĕçрен ăна çыхас тата кĕлте турттарса капана хывас ĕçсем кая юлса пыни çинчен пырать. Кăçал пĕлтĕрхинчен темиçе миллион гектар ытларах кĕлте турттарса капана хывнă. Апла пулин те, августăн 10-мĕшĕ тĕлне колхозсем пĕтĕм çулнă тырăран çуррине яхăн кăна капана хывнă. Курган, Молотов тата Новосибирск облаçĕсенче вара пĕтĕм вырнă тырпулăн çуррине те капана хывман.

Мĕне пĕлтерет-ха вăл тырпула вăхăтра капана хывманни? Çакă вăл тырпула çăмăрсемпе йĕпенсе пăсăлас, пĕчĕк купасемпе çĕмелсенче юхăнса выртса пăсăлас хăрушлăх умне тăратассине пĕлтерет. Урăхла каласан: тырпула капана хывманни вăл — ăна пухса кĕртменнипе пĕрех. Çак чăнлăх кашни çыншăн çав тери уççăн курăнса тăрать пулин те, ăна хăшпĕр вырăнти руководительсем асра тытмаççĕ; вĕсем «тырпула вырса пăрахсан, уборка пĕтет вара» тесе шухăшласа лараççĕ.

Тырпула капана хывас ĕçе кая хăварнине пула пысăк инкексем пулма пултараççĕ, çав ĕç кая юлнине татăклăнах пĕтермелле. Тырă вырас тата çулас ĕçĕн хăвăртлăхне чакармасăр, пачах та урăхла, ăна пур майпа та ӳстерсе пырса, тырпула капана хывас ĕç кая юлнине сирмелле, ăна мĕнле те тырпула пĕтĕмĕшпех вырса пĕтериччен тăсмалла мар. Çакна ăнлансa илмелле: тырпул пухса кĕртмелли чи лайăх вăхăт çитрĕ, умра — кĕркунне, кĕркуннепе пĕрле вара çăмăрсем пуçланаççĕ, халĕ вăхăта çухатни кайран хакла ларать.

Тырпула капана хывас ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстересси, уйрăмах лашасем çителĕксĕр пирки, пысăк йывăрлăхсемпе çыхăнса тăрать. Анчах та тырпулшăн кĕрешес ĕçре, çакă чи паха ĕçре, большевикла руководительсене нимĕнле йывăрлăхсем те хăрагса тăма пултараймаççĕ. Кĕлте турттарнă çĕрте лашасемпе кăна мар, ĕнесемпе те ĕçлеме пулать, ĕçлемелле те. Кĕлтене алăпа йăтса капана хывас ĕçе те тиркесе тăни пулмалла мар. Тырпул пухса кĕртнĕ çĕрти ытти питех те кирлĕ ĕçсенчен пушаннă ялти мĕнпур çынсене, çавăн пекех тата хуларан мобилизациленĕ çынсене те, халĕ кĕлте йăтса капан хывнă çĕре явăçтармалла.

Авăн çапас ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур. Пĕтĕм çĕршывĕпе илсен, августăн 10-мĕшĕ тĕлне тырпулсене пĕлтĕрхинчен нумайрах çапса пуçтарнă пулин те, нумай районсенче авăн çапас ĕç тӳсме çук кая юлса пырать. Куйбышев, Омск облаçĕсенче, çавăн пекех тата Тутар республикинче те авăн питĕ сахал çапнă-ха. Авăн çапас ĕç вăрахăн пынине пула тырпул нумай çухалса пĕтет, хăшпĕр вырăнта вара государствăна тырă парас ĕç те вăраха юлать.

Авăн çапас ĕç вăрахăн пыни пуринчен малтан молотилкăсемпе, локомобильсемпе çителĕксĕр усă курнинчен, çавăн пекех тата алăпа çапас ĕçе çителĕксĕр йĕркеленинчен килет. Авăна талăкĕ-талăкĕпех çапмалла тума кăтартса панине пур çĕрте те мар-ха пурнăçа кĕртнĕ. Нумай колхозсенче авăна кăнтăрла кăна, çитменнине унта та чарăна-чарăна çеç çапаççĕ. Авăн çапасси, тырă вырассипе кĕлте турттарса капана хывасси пекех, пĕр вăхăтра тумалли питех те кирлĕ ĕç. Çав ĕç кая юлса пынине халех пĕтермелле.

Çуркуннепе çуллахи çанталăк уйрăмлăхĕсене пула, çĕршывăн вăтаçĕрти, çурçĕрти тата кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи районĕсем тырă вырма ытти çулхисенчен каярах тухрĕç. Çакă вара çĕнĕрен йывăрлăхсем сахал мар кӳчĕ. Вăйлă тырпула вăхăтра та пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес тесен, вĕсем тырпул пухса кĕртес ĕçе кая юлса тытăннине кал-каллăнрах та йĕркеллĕнрех, çаврăнăçуллăнрах ĕçленипе витмелле. Анчах тырпул пухса кĕртес ĕçсем хăшпĕр районсенче çителĕксĕр пулса пыраççĕ-ха. Çакă вăл пуринчен малтан Чăваш тата Мордва АССР-ĕсене, Кировпа Вологда облаçĕсене пырса тивет.

Тырпул пухса кĕртес ĕçри вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи чи кирлĕ задача — тырпул хатĕрлемелли плана вăхăтра пурнăçа кĕртесси пулса тăрать. Колхоз хресченĕсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене мĕнле те пулин хăвăртрах пурнăçлас шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ. Государствăна тырă турттарса парас ĕçре ĕçлекен колхозниксем чăн-чăн паттăрлăх кăтартаççĕ. Вĕсем хатĕрлев пункчĕсене кунĕн-çĕрĕн тырă турттараççĕ, çав ĕçре колхоз транспорчĕпе кăна мар, хăйсен килĕсенчи ĕнисемпе те усă кураççĕ, анчах çапах та тырă турттарас ĕçе нумай районсенче ниепле те çителĕклĕ организациленĕ тесе шутлама çук. Тырпул пухса кĕртес ĕçе ăнăçлăн туса пыракан хăшпĕр районсенче те тырă турттарас ĕç графикран юлса пырать.

Тырă турттарас ĕç кая юлса пыни вырăнти хăшпĕр работниксем уборка ĕçĕсене тырă турттарас ĕçпе çыхăнтарса пыма пĕлменнинчен килет. Тырпул пухса кĕртессипе тырпул хатĕрлес ĕçсене пĕр вăхăтрах туса пырассишĕн кĕрешес вырăнне, вĕсем çак ĕçсене черетлĕн туса пыма пăхаççĕ,— малтан мĕнпур тырпула пухса кĕртетпĕр, унтан вара элеваторсем патне тырă турттарма пуçлатпăр, теççĕ вĕсем. Çакă вăл большевикла руководительсене тивĕçлĕ мар, сиенлĕ ĕç пулса тăрать!

Малта пыракан колхозсемпе районсен опычĕ çакна кăтартса пачĕ: государствăна тырă турттарса парас ĕçе уборкăн малтанхи кунĕсенчех организациленĕ çĕрте, çав ĕç валли кирлĕ таран туртăм вăйĕ тата автомашинăсем уйăрнă çĕрте, вĕсене мĕнле те пулин урăх ĕçе турткаламан çĕрте государствăна тырă парас ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Пачах та урăхла, пур пек автотранспортпа тата лашасемпе начар усă курнă çĕрте, вĕсене вак-тĕвек ĕçсене турткаланă çĕрте тырă турттармалли заданисене пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Çапла ĕнтĕ, тырă турттарас ĕçе хăвăртлатас тесен, чи малтан çав ĕç валли уйăрнă лашасемпе тата автомашинăсемпе туллин усă курмалла, вĕсем çителĕксĕр пулсан, çак ĕçе колхозсемпе колхозниксен, рабочисемпе служащисен ĕнисене явăçтармалла.

Колхозсем государствăна тырă памалли обязательствăсене тултарни — ялти кашни партипе совет работникĕшĕн, кашни коммунистпа комсомолецшăн политикăллă пысăк тĕрĕслӳ пулса тăрать, вĕсем мĕн чухлĕ ĕçлеме пултарнине тĕрĕслени пулать. Хатĕрлев планĕсемпе срокĕсем — иксĕлми çирĕп. Вĕсене пурнăçланă çĕре халĕ мĕнпур майсемпе вăйсене—хуласенчи автотранспорта та, колхозсемпе колхозниксен чĕрĕ туртăм вăйне те мобилизацилемелле.

Тырпул пухса кĕртессипе тырă хатĕрлесси пĕр вăхăтра килекен, вăй нумай ыйтакан тата пĕрре те кая хăварма юраман ĕçсен комплексĕ пулса тăрать. Вĕсен хăвăртлăхĕпе пахалăхĕ пĕтĕмĕшпех уйхир ĕçĕсем валли ĕç вăйне ытларах явăçтарнинчен, çынсен ĕçне тĕрĕс организациленинчен, пысăк ушкăнсемпе тĕпĕртетсе ĕçленине пĕтернинчен, уйрăм сдельщинăна анлăн пурнăçа кĕртсе пынинчен килет. Уйхирсенче, итемсем çинче, тырă турттарнă çĕрте мĕнле те пулин ĕç тума пултаракан кашни çын вăя хĕрхенмесĕр ĕçлеме тивĕçлĕ. Кашни çынăн хăйĕн заданийĕ пулмалла, унăн çав задание лайăх пĕлсе тămалла, ăна пурнăçа кĕртсе тата ытлашшипех пурнăçа кĕртсе пымалла.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçĕн татăклă кунĕсем çитрĕç. Вĕсем пирĕн ăнăçусене татса паракан кунсем пулса тăма тивĕçлĕ. Çавăнпа та тырă вырассипе çулассине, кĕлте турттарса капана хывассине, авăн çапассине тата государствăна тырă парассине мĕнпур майсемпе усă курса, анлă фронтпа туса пымалла. Кашни комбайн, кашни лобогрейка, кашни ĕç алли икĕ хут ытларах вăй хурса, икĕ хут тухăçлăнрах ĕçлеме тивĕçлĕ. Пур çĕрте те тырпула тăккалассинчен сыхлассишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене хăвăртрах тултарассишĕн пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшса ĕçлемелле. Тырпулшăн кĕрешесси, тырпула тăккаланине хирĕç кĕрешесси халĕ пĕтĕм уборка фронтĕнче — тырă вырнă тата çулнă çĕрте те, кĕлте çыхнă çĕрте те, кĕлте турттарса капана хывнă çĕрте те, итем çинче те, тырă турттарнă çĕрте те анлăн пулса пымалла. Тырпул пухса кĕртес ĕçĕн кашни участокне партипе совет организацийĕсен, колхозсемпе совхозсен тата МТС руководителĕсен çирĕп контролĕсе тăмалла.

(«Правда», августăн 18-мĕшĕнчи умĕтатьеран).

Колхоз председателĕпе унăн авторитечĕ синчен

Колхозсен председателĕсемпе ялти ертсе пыракан ытти работниксене партипе правительство пысăк ĕç шанса панă. Колхоз вăл — çĕршер колхознике пĕрлештерсе тăракан пысăк хуçалăх. Çак пысăк хуçалăх аллинче темиçе çĕр гектар çĕр пур, çав çĕре акса тумалли машинăсем, тĕрлĕ ĕç хатĕрĕсем тата лашасем пур. Кунсăр пуçне, колхозăн тĕрлĕ çуртйĕрсем, выльăх-чĕрлĕхсем, тырпул тата укçа-тенкĕ нумай. Колхоз вăл — нумай пурлăхлă кăткăс хуçалăх. Çавăнпа та ăна ертсе пырас ĕç — çав тери ответлă та хисеплĕ ĕç пулса тăрать. Колхоз вăйланса аталанасси, колхозниксен пурнăçĕ лайăхланса пырасси, çапла вара пирĕн çĕршыври колхоз строй тĕрекленесси колхоза ертсе пыракансем мĕнле ĕçленинчен нумай килет. Колхоз председателĕ, е бригадир, е колхозри парторганизаци секретарĕ хăйсем вуншар та çĕршер çынăн пурнăçĕшĕн ответлă пулнине туйса, партипе правительство шанăçне тÿрре кăларма тăрăшса ĕçлессĕ пулсан, ун пек колхозра пурăнма та, ĕçлеме те аван. Анчах колхоз председателĕ е ытти ертсе пыракан юлташсем ответлăха туймасăр, ÿрĕк-сÿрĕк ĕçлессĕ пулсан, вĕсем пуринчен ытла хăйсен интересĕсемшĕн тăрăшассĕ пулсан, халăх ĕçне пĕтĕм чуна парса туса пыма пĕлмесçĕ пулсан, çавăн пек колхозра вара хуçалăх юханса каять, пур ĕçсем те юлса пырассĕ, колхозниксен ĕçкунĕсем йÿне лараççĕ, пĕтĕм колхоз имшерленнĕçемĕн имшерленсе пырать. Çапла ĕнтĕ, колхоз ÿссе тĕрекленсе пырасси унăн ертсе пыракан çыннисенчен: председательрен, парторганизаци е комсомол организаци секретарĕнчен, бригадирсенчен, звеноводсенчен, ферма заведующийĕсенчен килет.

Пĕр-пĕр ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе-явнă чухне час-часах районсенче çакăн пек калаçнине илтме пулать: «Ку колхоз начар ĕçлет, ку вара малта пырать», теççĕ районра ĕçлекен юлташсем. Çакăн пек каланă чухне вĕсем час-часах пĕр ялсоветне кĕрекен колхозсенех илсе кăтартаççĕ. Çав юлташсем каланине тĕрĕс тесе йышăнма пулать-и-ха, е вĕсем тĕрĕс мар калаççĕ? Ку ыйту çине ответ парас тесен, ĕç çине тарăнрах та витĕртерех пăхни кирлĕ, колхоз мĕншĕн «начар» ĕçленине е тата мĕнле майпа «малта» пынине тĕплĕнрех пĕлни кирлĕ. Апла пулин те, пĕтĕмĕшпе илсен, çакна калама пулать: начар колхозсем çук, начар ĕçлекен руководительсем кăна пур.

Чăнах та, кашни районра теме пекех çакăн пек тĕслĕхсем пур: ялсоветне виçĕ колхоз кĕрет, вĕсенчен пĕри лайăх ĕçлет, тепри юлса пырать, виççĕмĕшĕ вара вăтам колхоз шутланать. Виçĕ колхозĕ те юнашарах лараççĕ: вĕсене пĕр-пĕринчен ял хапхи е тарăн мар çырма кăна уйăрса тăрать. Вĕсен çĕрĕсем те юнашарах: хĕсĕк йăранпа утмăçулсем кăна вĕсен хирĕсене уйăрса тăраççĕ. Пĕр колхозăн хирĕнче çăвакан çăмăр тепĕр икĕ колхозăн хирне те нÿрĕтет, пĕр колхозĕ çине пăхакан хĕвел тепĕр икĕ колхозне те ăшăтать. Çыннисем те вăл колхозсенче пĕр пек йăлапах, пĕр пек условисенчех пурăнса ÿснĕ. Çав вăхăтрах пĕр колхозăнче ĕçсем хăвăртрах та ăнăçлăрах пулса пыраççĕ, тепринче вара ăнмаççĕ, вăраха каяççĕ; пĕрин тыррисем лайăх ÿсеççĕ, теприн вăрлăх та тухаймасть. Мĕнрен килет-ха çакă? Вăл колхозсен çĕрĕсем тата çыннисем пĕр пекех-çке-ха! Колхоз начар ĕçленинчен килмест-и-ха вăл? Çук, çакă вăл колхоза ертсе пыракансем ĕçе организацилеме пĕлменнинчен, колхоз председателĕпе бригадирсем начар ĕçленинчен килет. Ахальтен мар кĕркунне, тырăсене пухса кĕртсен, юлса пыракан колхозри старриксем пăшăрханса çапла калаççĕ:

— Малтикассем кăçал ĕçкунĕ пуçне виçшер килограмм валеçме шутлаççĕ пулас...

— Çапла пуль, вĕсем ăсларах пулчĕç çав — иртерех акса хăварчĕç, тислĕкне те шеллемерĕç, ĕçлеме те ÿркенмерĕç,—теççĕ вĕсем.

Çак шухăша çирĕплетсе паракан примерсем сахал мар илсе кăтартма пулать. Сăмахран, Ишлей районĕнчи Кибечкасси ялсоветне «Большевик», «Красный танк» тата «Партизан» колхозсем кĕреççĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе юнашарах пурăнаççĕ. Вĕсем хушшинче мĕнле те пулин пысăк уйрăмлăх шырани усăсăр пулнă пулĕччĕ. Çапах та «Большевик» колхоз 5 кун хушшинче ыраш вырса пĕтернĕ те кĕлте кÿме, çуртырри вырма тытăннă, «Партизан» колхоз [illegible]

çак колхозри бригадирсем тырă вырнă çĕрте уйрăм сдельщинăпа ĕçлессине, колхозниксен социализмлă ăмăртăвне организацилеме пĕлмен. Çавна пула ĕнтĕ колхоз малашнехи ытти ĕçсенче татах та ытларах юлса пыма пултарать, тырпула нумай тăккаласа пĕтерет, тупăшсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçме вăхăт çитсен вара колхозниксен пăшăрханмалла пулать, мĕншĕн тесен вĕсем тырă «Большевик» колхоз членĕсенчен сахалтарах илме пултараççĕ. Çакăн хыççăн паллă мар-и ĕнтĕ: колхозниксем начар ĕçленĕ пирки мар, ĕçе организацилеме пĕлмен пирки «Партизан» колхоз юлса пырать; кунта пĕтĕм колхоз мар, колхоз председателĕ начар ĕçлет.

Акă мĕн калать кун пирки пирĕн çулпуç Сталин юлташ:

«Аталанса тата чечекленсе пыракан, государство заданийĕсене тĕрĕс-тĕкĕл пурнăçласа пыракан тата хуçалăх тĕлĕшĕнчен кунран-кунах тĕрекленсе пыракан колхозсене эпĕ сахал мар пĕлетĕп. Тепĕр енчен, çав колхозсемпе юнашарах вырнаçса тăракан, тырпул пĕр пек ÿснине тата объективнăй условисем пĕр пек пулнине пăхмасăрах, имшерленсе тата саланса пыракан колхозсене те эпĕ пĕлетĕп. Сăлтавĕ мĕнре-ха? Унăн сăлтавĕ акă мĕнре: пĕрремĕш ушкăнри колхозсене чăн-чăн коммунистсем ертсе пыраççĕ, иккĕмĕш ушкăнри колхозсене вара шлепкесем, чăн та, парти билечĕпе пулин те, çапах та шлепкесем ертсе пыраççĕ...

...Эпир влаçра тăратпăр, эпир государство хатĕрĕсене тытса тăратпăр, эпир колхозсене ертсе пыма тивĕçлĕ тата эпир ялти ĕçĕн пĕтĕм ответлăхне хамăр çине илме тивĕçлĕ» («Ленинизм ыйтăвĕсем», 408—409 стр.).

Çапла ĕнтĕ, колхозри пĕтĕм ĕçсемшĕн чи малтан ялти коммунистсем, колхоза ертсе пыракан юлташсем ответлă пулса тăраççĕ. Апла пулсан, колхоза ертсе пыракансем — ĕçе организацилеме пĕлекен, пысăк хуçалăха тытса пыма пултаракан, пĕтĕм халăх хисеплекен, авторитетлă та [illegible] çынсем пулмалла.

Паллах, пирĕн колхозсене нумайĕшне çавăн пек авторитетлă та пултаруллă çынсем ертсе пыраççĕ. Пирĕн çĕршер те пиншер колхозсем, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пырса, вăйлă тырпул туса илсе, фронтпа çĕршыв валли тырпул тата ытти апат-çимĕç çителĕклех парса тăраççĕ пулсан, çакăнта вара колхоза ертсе пыракансен тава тивĕçлĕ ĕçĕ те паларать. Анчах, тÿрех калас пулать, колхоз председателĕсем тата колхоза ертсе пыракан ытти работниксем хушшинче урăхларах йышши çынсем те пур-ха. Вĕсенчен пĕрисем хăйсене мăнкăмăллă, бюрократла тытаççĕ, колхозниксем хушшинче пулма, уйхире тухса е фермăна кайса тĕплĕ кăтартусем пама, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме юратмаççĕ. Вĕсем колхозниксен массинчен уйăрăлса каяççĕ те, вĕсем мĕн ĕçленине, мĕнле пурăннине пĕлме тăрăшмаççĕ, вĕсемпе ĕç çинчен калаçмаççĕ, вĕсене пĕр-пĕр ыйтупа доклад туса пама е ăнланман ыйтусене ăнлантарса пама тăрăшмаççĕ. Хăйсене пăхăнса тăракан çынсене ăнлантарса, ĕнентерсе тата вĕрентсе ĕçлеттерес вырăнне, вĕсем тĕрлĕ распоряженисем çырса çакма, выговорсем пама, колхозниксене кăшкăрса тăкса ятлама юратаççĕ. Чылай чухне вара çакăн йышши колхоз председателĕсем приказсем кăларасси патнех çитеççĕ, итлесех кайман колхозниксене «вăрман касма ярап», «тĕрмене хуптарап» тесе хăратма та тытăнаççĕ. Вĕсем хăйсене колхозăн пĕр-пĕччен хуçи тесе шутлаççĕ, вĕсене хирĕç никам та сăмах хушма пултараймасть тесе шутлаççĕ, кашт сăмах хушсанах, вĕсем: «Кам кунта хуçа — эсĕ-и, эпĕ-и?» тесе хăратма пăхаççĕ. Вĕсем вăтă колхозниксен сăмахне итлеме, вĕсенчен ăс илме, вĕренме юратмаççĕ, хăйсем кăна «нумай пĕлеççĕ», хăйсем кăна вĕрентеççĕ. Чăн та, çакăн пек председательсем пирĕн колхозсенче нумай мар, анчах çапах та ун пеккисем тĕл пулкалаççĕ-ха. Мĕн калама пулать ĕнтĕ çавăн пек мăнкăмăллă, хăйсене бюрократла тытакан руководительсем çинчен? Паллах, вĕсем йăнăш çул çинче тăраççĕ. Çавăн пек юлташсем ертсе пыракан колхоз часах юлса пыма, юхăнма тытăнать. Ун пек юлташсем çакна ăнланмаççĕ: колхоз вăл — улпут хуçалăхĕ мар, колхоз вăл — государство предприятийĕ те мар. Колхоз вăл — харпăрхăй ирĕкĕпе пĕрлешнĕ хресченсен коллективлă хуçалăхĕ, артельпе ĕçлемелли хуçалăх. Çак артелĕн хуçи колхозниксем пулса тăраççĕ, пĕр-пĕр пĕччен çын мар. Çавăнпа та колхозри мĕн чухлĕ те пулин пысăкрах ĕçсене приказсем çырса мар, правлени ларăвĕнче е колхозниксен пĕрлешÿллĕ пухăвĕнче сÿтсе-явса татса памалла. Колхоза лайăх ертсе пырас, лайăх руководитель пулас тесен, колхозниксене вĕрентме те, вĕсенчен вĕренме те пĕлес пулать; вĕсене кирлĕ чухне ăнлантарса памалла, кирлĕ чухне мухтамалла, кирлĕ чухне ятлани те усăллă. Çакна уйрăмăнах çамрăк председательсен асра тытас пулать. Кашни колхозрах вăтă колхозниксем пур. Вĕсем хăйсен пĕтĕм ĕмĕрне çĕрĕçĕпе ĕçлесе ирттернĕ, пуян опыт пухса пынă. Вĕсем час-часах колхозăн çамрăк председательне лайăх та усăллă канашсем параççĕ. Колхоз председателĕ çав канашсене итлеме тата вĕсемпе ĕçре усă курма пĕлмест пулсан, вăл вара начар руководитель.

Колхоза ертсе пыракан çынсен тата тепĕр йышши йăнăшне те кăтартса хăвармалла. Колхоз председателĕсем хушшинче чылай чухне çакăн пек юлташсем тĕл пулаççĕ: вĕсем мăнкăмăллă мар, йăваш чунлă; вĕсем колхозниксене кăшкăрса пăрахма мар, тивĕçлипе ятлама та хăюлăх çитерейместĕç. Колхозниксен пур ыйтăвĕсене те, усăллипе усăллă марринне пăхмасăрах, тивĕçтерме тăрăшаççĕ; колхоз членĕсене ĕçре тĕрĕс вырнаçтарса тухăçлăн ĕçлеттерес вырăнне, вĕсем пур ĕçе те хăйсем тума тăрăшаççĕ е итлекен колхозниксене çеç хушаççĕ. Колхозник вĕсем хушнă ĕçе тумасăр тăрать е начар тăвать пулсан та, вĕсем шарламасăрах ирттерсе яраççĕ, ответ тыттармаççĕ. Çакăн пек юлташсем ертсе пыракан колхозра вара ĕçсем хăй тĕллĕн, самотекпа пулса пыма тытăнаççĕ, колхоз юлса пыма, имшерленме пуçлать. Ĕç дисциплини колхозра çемçелнĕçемĕн çемçелсе пырать. Колхоз председателĕн авторитечĕ чакнăçемĕн чакса пырать, колхозниксем ăна хисеплеме пăрахаççĕ. «Пирĕн тилхепине тытса пыраканни çук çав», теççĕ ун пек колхозсенче час-часах. Кун йышши руководительсем вара акă мĕне ăнланмаççĕ: колхоз вăл — ăнсăртран пухăннă çынсен пуçтахсăр, ним йĕркесĕр ушкăнĕ мар; колхоз вăл — çирĕп дисциплинăллă, социализмла йĕркесем тăрăх ĕçлекен пĕрлешÿллĕ [illegible] колхоза юханса кайма парас мар тесен, колхоз пурлăхне çирĕп сыхлас тесен, колхоз председателĕн çемçешке пулма юрамасть, колхоза каялла туртакан çынсене çирĕп алăпа тыткалама пĕлес пулать — куçран ÿкес марччĕ тесе хăраса тăмалла мар. Колхоз председателĕн кампа йăваш пулмаллине, кампа хытă калаçмаллине пĕлес пулать.

Колхоза ертсе пыракансем хушшинче тата тепĕр йышши çынсем те сайра хутра тĕл пулаççĕ. Вĕсем государство интересĕсене хÿтĕлес тесе мар, пĕрлешÿллĕ хуçалăха тĕреклетсе пырас тесе мар, ытларах хăйсен пурнăçне лайăхлатас тесе, колхоз шучĕпе хăйсен пурнăçне юсас тесе председательре ĕçлеççĕ. Кун йышши председательсем вĕсем сахал, анчах çапах та пулма пултараççĕ. Вĕсем пирки çакна калама пулать: вĕсем колхозниксем умĕнче те, государство умĕнче те айăпа кĕреççĕ.

Çапла ĕнтĕ, колхоз председателĕ вăл— пĕрлешÿллĕ хуçалăхăн интересĕсене чи мала хуракан, ялти чи авторитетлă, чи пултаруллă организатор пулмалла. Паллах, çакăн пек руководитель пуласси чи малтан, председательсенчен хăйсенчен килет. Анчах çавăн пек руководитель пулас тесен, колхоз председателĕсен мĕн тумалла-ха?

Пуринчен малтан, ялхуçалăх артелĕн уставне лайăх пĕлмелле, партипе правительство ялхуçалăхĕпе колхозсем пирки йышăннă законсемпе решенисене тĕплĕн пĕлмелле. Вĕсене пĕлни çеç çителĕксĕр, вĕсене куллен тата пĕтĕм вăя хурса пурнăçа кĕртсе пымалла. Ялхуçалăх артелĕн уставне пăсакан, законсене пурнăçа кĕртсе пыман председатель чăн-чăн руководитель пулма пултараймасть.

Колхозри ĕçсем ăнăçлă пулса пырасси председатель массăпа, колхозниксемпе тачă çыхăнса ĕçленинчен килет. Çавăнпа та председателĕн хăйĕн кабинетĕнче хупăнса лармалла мар, хĕрÿ ĕç пынă çĕрте, колхозниксем ĕçленĕ çĕрте — хирте, итем çинче, фермăсенче ытларах пулса, кăтартусем памалла, ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе тăмалла, ĕçре мĕнле чăрмав пулма пултарассине малтанах курса тăмалла. Сăмахран, молотилкăн пĕр-пĕр пайĕ якалса çитнĕ, вăл кĕçех çĕмĕрĕлсе кайма, çавна пула молотилка чарăнса ларма тата темиçе кун ĕçсĕр тăма пултарать. Колхоз председателĕ çакна малтанах курса, молотилкăн çав пайне запас туса хумасть пулсан, машина пайĕ çĕмĕрĕлессе кĕтет пулсан, вăл вара пысăк йăнăш тăвать. Ун пек йăнăшсем тăвас мар тесен, колхозниксем мĕн каланине итлемелле, вĕсем мĕн шухăшланине пĕлмелле.

Кашни колхозник ĕçре хăйĕн йăлипе, хăйне уйрăм майсемпе ĕçлет. Вĕсенчен пĕрисен ĕç меслечĕсем ĕçе хăвăрт та лайăх тума пулăшаççĕ. Колхоз председателĕн çав лайăх меслете уйăрса илме пĕлмелле, вăл меслетпе ĕçлеме ытти колхозниксене вĕрентмелле. Калăпăр, тырă вырнă çĕрте колхозница нормăна 300 процент тултарать. Мĕнле майпа ĕçлет-ха вăл? Паллах, çак колхозница мĕнле меслетпе ĕçлени ыттисене те интереслентерет. Колхоз председателĕн тивĕçĕ—çав меслетпе пурне те паллаштарасси. Анчах юрăхсăр е тата киревсĕр майсемпе ĕçлекен колхозниксем те тĕл пулма пултараççĕ. Сăмахран, Çĕрпÿ районĕнчи «Чуваш. ЦИК» колхозра пĕр колхозник тырă акнă чухне, хăй валли тырă перекетлесе хăварас тесе, тырра сайра акнă, вăрлăхăн пĕр пайне пытарса хунă. Çавна пула колхоз кăçал кашни гектартан вуншар пăт тырă сахалтарах пухса илчĕ. Колхоз председателĕн çак юрăхсăр ĕç колхоза тата колхозниксене мĕнле пысăк сиен кÿнине ăнлантарса памалла, ун пек юрăхсăр ĕçсем тăвакансене тăрă шыв çине кăларма, кирлĕ чухне ответ тыттарма та пĕлмелле.

Юлашкинчен, колхоз председателĕн хăйĕн политикăллă пĕлĕвне тăтăшах ÿстерсе пымалла. Унăн колхозри ĕçсем мĕнле пулса пынине çеç мар, районра, республикăра е тата пĕтĕм Совет Союзĕнче ĕçсем мĕнле пулса пынине те пĕлсе тăма тăрăшмалла, пирĕн обществăн пурнăç законĕсене вĕренсе пĕлме тăрăшмалла. Çакна тăвас тесен, председателĕн хаçат-журналсем, кĕнекесем ытларах вуламалла.

Паллах ĕнтĕ, колхоз председателĕсем партипе советăн районри организацийĕсенчен пысăк пулăшу кĕтеççĕ, вăл çапла пулмалла та. Районри ертсе пыракан юлташсем колхоз председателĕсене ĕçлеме вĕрентсе пыраççĕ, йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшаççĕ, ĕçри çитменлĕхсене кăтартса параççĕ, кирлĕ чухне ятлаççĕ, çапла тума тивĕçлĕ те. Анчах вĕсен ĕçĕнчи чылай чухне тĕл пулакан пĕр çитменлĕхе кăтартса хăварас пулать. Час-часах çапла пулать: районри пĕр-пĕр работник колхоза пырать те, ĕçсем мĕнле пыни çинчен ыйтса пĕлет. Калаçуран пĕр-пĕр ĕç начар пыни палăрать, вара çав работник колхоз председательне унта ларакан пĕтĕм халăх умĕнче, кирлĕ мар çĕртенех, тементепĕр каласа ятласа тăкать. Çакă вăл тĕрĕс мар, çакă вăл колхоз председательне пулăшни мар, унăн авторитетне чакарни çеç пулать. Колхоз председательне ăçта тата мĕнле ятламаллине пĕлес пулать, колхозниксем умĕнче унăн авторитетне çĕклес пулать. Çакна тăвас тесен, колхоз председательне колхозри ĕçе юсама куллен те тĕплĕн пулăшас пулать, унăн йăнăшĕсене тÿрлетсех тăрас пулать, çитменлĕхсемпе лайăх енĕсене кăтартсах тăрас пулать, вара унăн ĕçĕ те юсанать, авторитечĕ те хăпарать.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче колхозсене ертсе пыракан работниксем çирĕп тĕрĕслÿ витĕр тухрĕç, вĕсем фронтпа çĕршыва тырпул тата апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар çителĕклĕ парса тăрас задачăна ăнăçлăн пурнăçлама пулăшрĕç. Иккĕленмелли çук, вĕсем хăйсен задачисене малашне те ăнăçлăн пурнăçа кĕртĕç.

Хĕрарăмсен фашизма хирĕçле митингĕ

Мускаврa августăн 20-мĕшĕнче хĕрарăмсен фашизма хирĕçле тăваттăмĕш митингĕ пулса иртнĕ. Çав митингра тылпа фронтри героиньăсем — çапăçу самолечĕсене тăвакан инженерсемпе строительсем, питĕ паллă актрисăсем, пир тĕртекен чаплă хĕрарăмсем, колхоз уйхирĕсенчи стахановкăсем, партизанкăсем, летчиксем, снайперсем, разведчицăсем пулнă.

Митинга хĕрарăмсен Фашизма хирĕçле комитечĕн председателĕ Совет Союзĕн Геройĕ **В. С. Гризодубова** уçнă.

— Пирĕн хĕрарăмсем хăйсен Тăван çĕршывне, аслă тăван Сталина юратнинче иксĕлми вăй тата паттăрлăх тупаççĕ, — тет **Гризодубова** юлташ. — Ăна, пирĕн аттене, пирĕн туспа учителе, эпир, совет хĕрарăмĕсем, чи малтан саламлатпăр, чунтан-чĕререн юрататпăр, тулли кăмăлпа тав тăватпăр.

Митингри хĕрарăмсем çак сăмахсене тăвăллăн алă çупса хапăл тăваççĕ.

— Совет хĕрарăмĕсем çак Отечественнăй вăрçăра пирĕн халăхшăн калама çук пысăк ĕçсем турĕç, — тет малалла **В. С. Гризодубова**. — Промышленноçпа транспортра, колхоз уйхирĕсемпе наука учрежденийĕсенче, Хĕрлĕ Çарта тата партизансен отрячĕсенче совет патриоткисем пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле фашизма çĕнтерес ĕçе тÿптаса пурăнаççĕ.

Трибуна çине çăмăл бомбардировочнăй полкăн командирĕ гварди майорĕ **Евдокия Бершанская** хăпарса тăрать.

— Ирĕке юрататакан çĕршывсенчи хĕрарăмсем, — тет **Бершанская**, — сире эпĕ, воин тата ача-амăшĕ пулса, çапла калатăп: пур çĕрте те — тылра ĕçлетĕр-и эсир, фронтра-и, самолет штурвалне тытса пыратăр-и, станок патĕнче ĕçлетĕр-и, партизансен отрядĕнче кĕрешетĕр-и, наука лабораторийĕнче ĕçлетĕр-и, — пур çĕрте те фашистла ирсĕрсене хирĕç кĕрешĕр!

Çапăçакан Польшăри хĕрарăмсен ячĕпе митинга **Анна Мадалинская** подпоручик саламлать.

Трибуна çинче — белорусс партизанки **А. Н. Захарова**.

— Хам виличченех эпĕ Гомель облаçĕнчи Рогачево районĕнчи пысăк куçлă, типшĕм, 10 çулхи хĕре манас çук, — тет А. П. Захарова. — «Мана вĕлерсен, хăма çине манăн ята çырса хурăр, эпĕ çак тĕнчере пурăннине çынсем пĕлсе тăччăр», тесе ыйтнă вăл хăйне персе вĕлерес умĕн офицертан-палачран. Ача çапла чуна ыраттармалла ыйтнине хирĕç нимĕç пульли унăн ÿтне шăтарса тухнă. Эпир, партизанкăсем, унăн ятне пĕлеймерĕмĕр, анчах та эпир Рогачево районĕнчи çав типшĕм хĕршĕн тата фашистла юнĕçекенсем асаплантарса вĕлернĕ ытти совет ачисемшĕн тăшмана хытă тавăртăмăр.

Митингра тата Ивановăри чи вăтă ткачиха **А. В. Шубина**, Калинин облаçĕнчи «Путь Ильича» колхозăн председателĕ **М. А. Копейкина**, Уралмашри инженер-механик **Н. Ф. Рязанова**, Югославири партизанка **Паунович**, Киров заводĕнчи мастер **И. Б. Булыгина**, Совет Союзĕн халăх артистки Наталия Ужай (Украина), партизанка Соня **Аартос** (Эстони), танкистка Александра Бойко, Сталин ячĕпе тăракан заводри инженер Анастасия **Кузьмина** (Мускав) сăмах тухса каланă.

Англири, США-ри, Канадăри, Австралири тата ытти çĕршывсенчи хĕрарăмсен фашизма хирĕçле организацийĕсенчен митинг ячĕпе саламлă телеграммăсем нумай пынă.

Митинг Верховный Главнокомандующине Совет Союзĕн Маршалне Сталин юлташа калама çук хытă хĕпĕртесе салам янă.

Фашизма хирĕçле тăваттăмĕш митинг Англири, Америкăри, Францири, Польшăри, Югославири, Чехословакири, Бельгири, Норвегири, Данири, Голландири, Грецири тата ирĕклĕхе юратакан мĕнпур çĕршывсенчи хĕрарăмсене чĕнсе калакан çыру йышăннă. (ТАСС).

Пĕр çул вĕренмелли ялхуçалăх шкулĕсем

Совет Союзĕн 189 хулипе ялĕнче кăçал пĕр çул вĕренмелли ялхуçалăх шкулĕсем уçăлаççĕ. Ку шкулсем вĕсем — çĕнĕ йышши шкулсем. Вĕсем уйхир ĕçĕн, сад ĕçĕн, пахча-çимĕç лартса ÿстерес ĕçĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн, лаша ĕрчетес ĕçĕн ăстисене тата кĕçĕн ветеринари фельдшерĕсене вĕрентсе хатĕрлессĕ. Çав шкулсенче вĕренекенсем вĕренÿ вăхăчĕн çурринчен кая мар практикăллă ĕçсенче пулаççĕ.

Ялхуçалăх шкулĕсене колхозниксене, МТС тата çĕрĕç органĕсен работникĕсене —16 çула çитнисене тата унтан аслăраххисене, вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илессĕ. Вĕреннĕшĕн укçа илмессĕ. Вĕренекенсене вĕренÿ хатĕрĕсем тата государство стипендийĕ параççĕ. (ТАСС).

Францири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ЭКСПЕДИЦИЛЛЕ ВĂЙĔСЕН ВЕРХОВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Пирĕн çарсем Лизье хули патнелле малалла куçнă. Граншан хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнелле наступлени туса пыракан чаçсем хуларан 5 миля малалла кайнă. Вир шывĕн сылтăм хĕрринче тăшман хытă хирĕç тăрать пулин те, çĕнĕ территори туртса илнĕ. Пирĕн çарсем Ливаро хулине йышăннă та Дозюле хулинчен кăнтăралла ăнăçлăн наступлени туса пыраççĕ. Фалез хулинчен кăнтăртарахра тăшман танкĕсем, çавăрса илнĕ ункăран тухасшăн пулса, юлашки чун-хавалĕпе çапăçнă, анчах вĕсен ĕçĕ ăнăçман. Ку районри вырăна тăшмантан тасататтăççĕ. Аржантан хули пирĕн алăра. Пирĕн çарсем нимĕçсен çавăрса илнĕ ункăри чаçĕсене (унта 14 дивизирен кая мар) артиллеририрен хăватлă персе тăнă. Сена шывĕн районĕнче союзниксен çарĕсем Мант-Гассикур хули патне çитнĕ.

Кунтан кăнтăртарахра пирĕн çарсем Дре хули районĕнче хирĕç тăракан тăшман чаçĕсене пĕтереççĕ. Орлеан хули таврашĕнче нимĕçсен уйрăм ушкăнĕсене пĕтерсе тăкнă. Вăйлă çумăрсем, çил-тăвăл тата пĕлĕтлĕ çанталăк тăнă пирки союзниксен авиацийĕ вăйлах çапăçайман».

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ПАРИЖА АЯКРАН ÇАВĂРСА ИЛМЕ ТЫТАННА

ЛОНДОН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен Париж çинелле наступлени туса пыракан çарĕсем Версаль хули патне çывăхарса çитеççĕ, хулана пырса кĕресси мĕн пурĕ те 6 миля кăна тăрса юлнă. Çав вăхăтрах Паттон генерал командир пулса ертсе пыракан танковăй армин сылтăм флангĕ анлă фронтпа Парижа аякран кайса çавăрса илме пуçланă. Америка патрулĕсем халĕ Мелен тата Фонтебло патне çитнĕ. Ку пунктсенчен Парижа çурçĕр енчен, хĕвелтухăç енчен тата кăнтăрхĕвелтухăç енчен пырса кĕмелли стратегиллĕ шоссе çулĕсем пуçланса каяççĕ.

ПАРИЖ ХАЛĂХĔ, АЛЛА ХĔÇПĂШАЛ ТЫТСА, ОККУПАНТСЕНЕ ХИРĔÇ ÇĔКЛЕННĔ

ЖЕНЕВА, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Иртнĕ çĕр Парижри радио нимĕçсен Парижри гарнизонĕн командующийĕн приказне виçĕ хутчен панă. Çав приказра çапла каланă: «Ответлăха туйман çынсем, алла хĕçпăшал тытса, оккупациллĕ влаçсене хирĕç çĕкленнĕ», тенĕ. Германи командующийĕ çапла каласа хăратать: çав восстание пусармашкăн эпĕ нимĕнле мера умĕнче те чарăнса тăмăп, тет. Çав приказ 21 сехетрен пуçласа 7 сехетчен хулара кирек мĕнле майпа та çÿреме чарнă; халăха çапăçусен районĕ пулса тăма пултаракан районсенчи çулсем çине тухма чарнă.

«Германи çарĕсене çак распоряженисене пăхăнман граждансене асăрхаттармасăрах вĕсене хирĕç хĕçпăшалпа усă курма хушнă, — тенĕ çав приказра. — Театрсене, киносене, савăнмалли вырăнсене, çавăн пекех тата кафесене пурне те хупаççĕ. Çуртсенче чÿречесем пурте хупă тăмалла. Чÿречесем патĕнче тăма юрамасть. Хапхасемпе алăксем яланах яр уçă тăмалла. Виçĕ çынтан ытла пухăнса тăма юрамасть. Çак распоряженисене пăхăнмасан, çарсем хĕçпăшалпа усă курма пуçлаççĕ».

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔС ТАВРАШĔНЧИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Çурçĕр Италире августăн 20-мĕшĕнче 8-мĕш армин чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, çыран секторĕнче Метауро шывĕ çине тухнă. Халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă.

7-мĕш армин чаçĕсем Кăнтăр Францире хăвăрт наступлени туса пыраççĕ. Вĕсем халĕ Рона шывне юхса кĕрекен Дюранс ятлă пĕчĕк юханшывăн улăхне тухнă, тăшманăн Тулон хулине пырса кĕмелли çулсем çинчи позицийĕсене хăратса тăраççĕ. 7-мĕш армин çарĕсем наступлени туса пынă май тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тăкаççĕ. Француз çарĕсем Тулон портĕнчен 3 миля çурçĕртерехре ларакан пункт патне пырса тухнă, вара унтан çурçĕр-хĕвеланăçнелле чылаях куçнă. Американецсен Дюранс шывĕ урлă каçнă малти отрячĕсем Францин хĕçпăшалланнă шалти вăйĕсемпе пĕрлешнĕ, çак вăйсем тăшманăн Пертюи хулинчи гарнизонне çавăрса илнĕ. Союзниксен çарĕсен ытти чаçĕсем Провансра Экс хули тулашне пырса тухнă. Тыткăна илнисен шучĕ 14.000 çынна çитнĕ.

Йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем августăн 20-мĕшĕнче Чехословакири нефть тасатакан заводсене тата Венгрири чугун çул деповĕсемпе пĕр аэродрома тапăннă. Тактика авиацийĕн самолечĕсем тăшманăн Кăнтăр Францири тата Çурçĕр Италири çулйĕрĕсем çине, пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсем çине тата артиллери батарейисем çине бомбăсем пăрахнă. Союзниксен авиацийĕ çавăн пекех тата Югослави çийĕнче те çапăçнă. Августăн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен самолечĕсем Штейре хулинчи (Австри) танксем тăвакан завода тапăннă.

ЛОНДОН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентствин Кăнтăр Францири корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Кăнтăр Францире нимĕçсен резервра тăракан 62-мĕш армейски группин командующине Фердинанд Нейлинг генерала тыткăна илнĕ. Ку ĕнтĕ Кăнтăр Францире тыткăна илнĕ иккĕмĕш генерал пулса тăрать.

ФРАНЦУЗ ÇАРĔСЕМ ТУЛОН ХУЛИНЕ КĔНĔ

ЛОНДОН, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕнчен çапла пĕлтерет: француз çарĕсем Тулон хулине кĕнĕ, тет.

ФРАНЦУЗ ПАТРИОЧĔСЕМ ТУЛУЗА ХУЛИНЕ ТЫТСА ИЛНĔ

АЛЖИР, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, француз патриочĕсем Тулуза хулине йышăннă.

КЕЙТЕЛЬ ФИНЛЯНДИЕ ПЫНА

СТОКГОЛЬМ, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Хельсинкире официально çапла пĕлтернĕ: августăн 17-мĕшĕнче Гитлерăн верховнăй командовани штабĕн начальникĕ Кейтель фельдмаршал Финляндие çитнĕ, вăл унта Маннергеймпа тĕл пулса калаçнă.

Кейтель Финляндие кайни çинчен «Дагенс нюхетер» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Маннергеймпа халь нимĕçсен верховнăй командованийĕн представителĕ тĕл пулса калаçни вĕсем пуринчен ытла вăрçă ыйтăвĕсене сÿтсе-явнине пĕлтерет», тет.

ГИТЛЕР МАННЕРГЕЙМА НАГРАДĂЛАНИ

СТОКГОЛЬМ, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Стокгольмс тиднинген» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ каланă тăрăх, Берлинра çапла пĕлтернĕ: Гитлерăн верховнăй командовани штабĕн начальникĕ Кейтель фельдмаршал Хельсинкире пулнă чухне, Гитлер хушнипе, Маннергейма тата Финляндин генеральнăй штабĕн начальникне Гейнрикса Германин орденĕсене панă.

НИМĔÇСЕМ — ПОЛЯК КУЛЬТУРИНЕ ПĔТЕРСЕ ЛАРТАКАНСЕМ

ЛЮБЛИН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). ТАСС корреспонденчĕ поляксен театрпа музыкăн паллă представителĕсемпе калаçнă. Калаçура поляксен театрĕн вăтă деятелĕ — Варшавăри опеpăпа балет театрĕн режиссерĕ Тадеуш Воловский, Краковри опера театрĕн дирижерĕ Мечислав Дробнер тата Варшавăри Шопен ячĕпе тăракан музыка академийĕн доценчĕ Александр Бархач пианистпа композитор пулнă. Вĕсем Польшăна Германи оккупациленĕренпе поляк культурин деятелĕсем калама çук хăрушă пурнăç пурăнса ирттерни çинчен тата Польшăри культурăллă пурнăçа çĕнĕрен ура çине тăратас тĕлĕшпе Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕ тăвакан ĕçсем çинчен каласа панă.

Режиссер Тадеуш Воловский нимĕçсем оккупациленĕ Варшавăран виçĕ эрне каялла тарса тухнă. Вăл каласа пани чуна çÿçентерет. Польшăри театрсенче ĕçленĕ 2.000 деятельтен оккупаци вăхăтĕнче пĕтнĕ 410 деятĕле Тадеуш Воловский хăй лайăх пĕлсе тăнă.

Вăрçăччен Варшавăра 16 театр пулнă. Вĕсене пурне те нимĕçсем пĕтерсе лартнă. Драма театрĕн пĕр çуртĕ кăна темле майпа сыхланса юлнă, анчах унта та пулин нимĕç оперетисене çеç лартаççĕ.

Нимĕçсем Польшăри культура учрежденийĕсене пурне те çаратса пĕтернĕ, художество енчен питĕ паха япаласене Германие илсе кайнă.

Польша халăхĕн ирĕклĕх комитечĕ хăй ĕçлеме пуçласанах çак культура учрежденийĕсене çĕнĕрен ура çине тăратма тытăннă. Ятарласа культурăпа искусство управленийĕ тунă, ăна Ржимовский профессор ертсе пырать. Люблин хулинче поляк театрне уçнă. Писательсемпе художниксен союзĕсене тунă. Пĕрремĕш радиостанци уçăлнă. Тăватă сасăпа юрлакан арçын хорĕ тата капелла çĕнĕрен ĕçлеме пуçланă.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче Польшăра музыка институчĕ ĕçлеме пуçлать. Воеводствăсемпе уездсенче халăх пултарулăхĕн çурчĕсем тата ялти клубсем тăваççĕ.

ФРОНТРАН ТАВĂРĂНСАН...

Вĕсен кашнинех кăкăрăн сылтăм енче темиçе сантиметр тăршшĕ сарă хăю татăкĕ курăнса тăрать.

Ку — фронтра йывăр аманнине, Тăван çĕршывшăн паттăрăн çапăçса юн юхтарнине кăтартакан хисеплĕ паллă. Йывăр суранланнипе вĕсем текех строя тăрайман вара. Вĕсене киле янă.

Анчах фронтран киле таврăнсан, аманнă ал-урисем ытлашши ыратми пулсанах, вĕсем тылри, ялти ĕçе хутшăнма тытăннă. Фронтри пекех, вĕсем кунта та пĕтĕм чĕрепе çунса, пур вăя хурса ĕçлеççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн тыл ырма-канма пĕлмесĕр ĕçлемесен, фронта мĕн кирлине пĕтĕмĕшпех тата вăхăтра туса памасан, хаяр та усал тăшмана аркатса çĕнтерес сехет кая юлса пыма пултарнине вĕсем, фронтовик пулнăскерсем, пуринчен те авантарах ăнланаççĕ...

Лейтенант-танкист Павел Селиванов фронтран ури суранланнипе таврăннă. Тăван яла (Канаш поселок, Етĕрне районĕ) çитсенех ăна колхоз председателĕ пулса ĕçлеме сĕннĕ, анчах та лейтенант тăруках килĕшме пултарайман, мĕншĕн тесен унăн суранĕ тÿрленсех çитеймен пулнă-ха, вăл туя çине тайăнса çеç çÿрекеленĕ, час-часах больницăна кайма тÿр килнĕ, килте те ытларах выртмалла пулнă. Анчах суранĕ иртсе кая пуçласанах, вăл колхоза хăй аллине илме килĕшнĕ.

Тÿррипе каласан, колхозри ĕçсем ун чух ăнса пыман, çитменлĕхсем пур енчен те палăрса тăнă. Пуринчен ытла — çуракине епле иртересси хăратнă. Колхозри темиçе лашапа пĕтĕм çĕре чипер сухаласа акса хăварасси çинчен шухăшламалли те пулман; çĕрĕ нумай—лашасем сахал...

Мĕн тăвас? Епле пулсан та, çуртыррисене акас пулать вĕт!..

Селиванов тĕрлĕ тĕслĕ те шухăшласа пăхнă, кÿршĕ колхозсенчен пулăшу ыйтма та шутланă, районри организацисемпе яла тракторсем илсе килесси çинчен те калаçса пăхнă, анчах чуна лăплантармалли меслет тупăнсах çитеймен.

— Чим-ха, спирт заводĕнче тахçанах пăрахăçа кăларнă тракторсем пур тесе калатчĕç, — тавçăрса илнĕ вăл юлашкинчен, — çавсемпе ĕç кăларма пулмастьши?..

Селиванов завода кайса пăхнă та, унта чăнах та икĕ трактор сапаланса ларнине курнă. Вĕсем кивĕ пулнă ĕнтĕ, тахçантанпах ĕçлемен, вĕсен нумай деталĕсем çитмен. Çапах та, сăнасан-сăнасан, икĕ трактортан пĕр трактор пухма май пурри курăннă.

— Çав икĕ трактортан пĕр трактор пухма ирĕк парăр мана, — тенĕ ĕлĕк тракторист, унтан танкист пулнă председатель завод директорĕ патне пырса. — Сирĕн хăвăрăн çĕре те сухаласа парăп, хамăн колхозăнне те сухалăп вара...

Директор килĕшнĕ. Селиванов çавăнтах ĕçе тытăнса, темиçе кун хушши çак икĕ ванчăк тракторпа тăрмашнă.

— Пурĕпĕр ĕçлекен тăватăп! — тенĕ вăл, деталь хыççăн деталь, винт хыççăн винт вырнаçтарса.

Вара тăрăшни чăнах та ахаль пулман. Трактор хута кайнă. Селиванов çав хăй «вилĕмрен чĕртнĕ» тракторпа завода 40 гектар çĕр сухаласа панă, унтан хăйĕн колхозне илсе пырса пĕтĕм çуртырри хирне сухаласа акнă. Çавна пула колхоз çураки ĕçĕсене нумай колхозсенчен малтан пĕтернĕ.

Кĕраки умĕн Павел Селиванов çав трактора çĕнĕрен тĕплĕ ремонт туса лартрĕ. Лашасем çителĕксĕрри колхозниксене хăратмасть ĕнтĕ.

— Председатель матур пирĕн, — теççĕ вĕсем, — эпир тырра яланхи пекех вăхăтра акса хăваратпăр...

* * *

Ямашри (Хĕрлĕ-Чутай районĕ) Николай Теплушкин, парти кандидачĕ, фронтран кăçал çуркунне килнĕ. Суранĕ пирки вăл та тÿрех ĕçлеме пуçлайман. Июлĕн 15-мĕшĕнче вара, колхоз тырпула пуçтарса кĕртес ĕçе хатĕрленнĕ вăхăтра, вăл колхозри 2-мĕш бригадăна ертсе пырассине хăй çине илнĕ.

— Пирĕн бригада — фронтовой бригада пулать, — тенĕ вăл хăйĕн колхозникĕсене малтанхи канашлурах. — Чăн малтан, пирĕн дисциплина çарти пек пулмалла. Эп — сирĕн ĕçри командир, эп хушни — сирĕншĕн закон. Çапла ĕçлесен кăна эпир мала тухма пултаратпăр. Килĕшетĕр-и?

— Килĕшетпĕр, — тенĕ колхозниксем.

Иккĕмĕш бригада унччен чăнах та кая юлса пыракан бригада пулнă. Анчах фронтра пиçнĕ бригадир хăй сăмахне çирĕп тытнă: тырă вырма пуçласан 2—3 кунтах унăн бригади малти вырăна тухнă. Вăл колхоз правленин бригадăсем хушшинче куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ.

Ку акă мĕнрен килнĕ.

Теплушкин хăйĕн бригадинчи çынсене кашнин пултарулăхне шута илсе ĕç панă. Кашни хăй вырăнĕнче пулнă. Кашни хăйĕн хăçан мĕн тумаллине малтанах пĕлсе тăнă. Вара ĕç умĕн никама та чĕнсе çÿреме кирлĕ пулман.

Заданисене Теплушкин тĕплĕн кăтартса панă.

— Çавăнта, çав сехетре, çавăн чухлĕ...

Анчах хăйĕн çыннисенчен хыттăн ыйтнипе пĕрлех, вăл вĕсене ĕçре кирлĕ условисем туса пама пĕлнĕ. Сăмахран, унăн бригадинче колхозниксене апат çитерессi кая юлман. Пĕр хиртен тепĕр хире куçнă чух кухня та хыççăнах пынă.

Теплушкин ĕçе те аван организацилеме пĕлет. Пĕр-ик кун çăмăр çунă вăхăтра вăл хăй бригадине «хĕвел пăхасса» кĕтсе лартман, çавăнтах витнĕ итем тума тытăннă. Ăна вара пур бригадăсенчен те малтан тунă.

Çанталăк юсансан, ĕçе каллех хĕрÿллĕн тытăнса, тырра пуринчен малтан вырса пĕтернĕ, государствăна памалли тырра та никамран малтан çапса хатĕрленĕ.

Фронтавик-бригадир хăйĕн сăмахне пурнăçланă.

ЛЕОНИД АГАКОВ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

паян, августăн 23-мĕшĕнче,

ЮЛАШКИ ХУТ

сасă, музыкăллă комеди

«СВИНАРКА И ПАСТУХ»

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетренех ĕçлеме тытăнать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00649. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16,000 экз.